Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАЙ 26 КĔÇНЕРНИКУН
118 (4931) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать — ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ — Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйăн 6—23

Чăваш халăхĕ Верховнăй Совета депутата суйлама тăратнă пĕррремĕш кандидат

Иосиф Виссарионăвич СТАЛИН

йулташ Чăваш АСС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйланма килĕшӳ панă

Аслă СТАЛИНĂН сывăх соратникĕсем, партипе правительствăн йуратнă руководителĕсем: В. М. МОЛĂТĂВ, Л. М. КАГАНОВИЧ, К. Йе. ВОРОШИЛĂВ, А. И. МИКОЙАН, Н. И. ЙЕЖОВ йулташсем Чăваш АСС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ панă

Халăх хавхаланулăхĕ

1938 çулти майăн 25-мĕш—Чăваш халăх историнче паллă кун. Çак кун Шупашкара питĕ савăнăçлă хыпар çитрĕ. Чăваш халăхĕн Верховнăй Совета суйлама палăртнă пĕррмĕш кандидат—пĕтĕм тĕнчери халăхсен аслă çулпуçĕ **Иосиф Виссарионăвич Сталин** — Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Канаш савăт суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ панă.

15 пин çын пухăнчĕç ĕнер кас 7 сехетре Шупашкарти Хĕрлĕ плошчĕте.

Епĕ телейлĕ,—тет ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн çекретарĕ — ССРС Верховнăй Совет депутачĕ Г. И. Иванов йулташ,—пайанхи кун чăваш халăхĕн историнче пулман савăнăçлă хыпар çиччен пĕлтерме. Пирĕн çулпуçĕ, Ленинăн чи лайăх вĕренекенĕ—Иосиф Виссарионăвич Сталин Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланма Канаш савăт суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ панă.

И. В. Сталин йатне каласан пĕтĕм плошчĕт — „Сывă пултăр аслă çулпуç Сталин!“, „Сывă пултăр Ленин—Сталин партти!“ тенĕ сăмахсем кĕрлесе кайаççĕ.

Аслă Сталин Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пани çинчен пĕлтерни пĕтĕм халăха çĕклентерсе йарат.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Сталинăн чи сывăх соратникĕсем килĕшӳ панă.

Сталинăн сывăх соратникĕ — Совет правительстви пуçлăхĕ **В. М. Молăтăв** йулташ Шупашкарти 2-мĕш суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ панă.

Совет Сойузĕн пĕррмĕш маршалĕ — Оборонă Халăх Комиссарĕ **К. Йе. Ворошилăв** йулташ Мучар суйлав округĕ тăрăх (Тăвай районĕ). **Л. М. Каганович** йулташ Улатăрти чукунçул суйлав округĕ тăрăх, Микойан йулташ Иетĕрне йал суйлав округĕ тăрăх, **Н. И. Йежов** йулташ Чурачăк суйлав округĕ (Çĕрпӳ районĕ) тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ панă.

Ийунĕн 26-мĕшĕ сывăхарса килет. Çак кун чăваш халăхĕ хăйĕн сассинĕ çĕршывăн хисеплĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн, Ленин — Сталин партти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйа хурса çĕклекенсемшĕн парĕ.

Чăвашполиграфтрест типографи рабочисенчен Ковалевский йулташ тухса калат.

Вăл Сталин тата ун сывăх соратникĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланма килĕшӳ пани Чăваш халăхĕшĕн пысăк чыс, пысăк хисеп пулни çинчен калат.

Унтан хулари сутĕç работникĕсенчен Крупскайа йачĕпе тăракан шкулта ĕçлекен учителница Черпакова йулташ калат.

Черпакова йулташ хăйĕн хĕрӳлĕ, чĕререн тухакан сăмахĕпе халăхсене пуйан та культурлă пурнăç, тĕнчери чи демократилĕ Конституци туса панă аслă Сталинăн, Ленинпа Сталин партийĕшĕн, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн саса пама чĕнет.

Трибунă çине Кудрйашова йулташ улăхат. Вăл електростанцинчи рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служăщисен йачĕпе сăмах калат.

Йулашкинчен Шупашкар хула Совечĕн председателĕ — РСФСР Верховнăй Советне суйлама кандидата тăратнă П. И. Калинкина йулташ питĕ хастарлă, çĕклеӳлĕ сăмах калат.

— Пайанхи кун хĕпĕртенипе пуçри шухăшсем çинчен каласа пама сăмах та çитмест. Сталин йулташ Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланма килĕшсе пире пысăк хисеп турĕ.

Есĕр мана РСФСР Верховнăй Советне депутата тăратрăр. Çакă маншăн тата пысăк чыс.

Епĕ ĕлĕк батрачка, сыру пĕлмен çын пулнă—халĕ мана партти государствăн пысăк ĕçне тăвакан çын пулмалăх ӳстерсе çитĕнтерчĕ. Епĕ государствă дейательлĕне тивĕçлĕ задачисен çӳллĕшĕнче пулма сăмах паратăп.

Митинг пысăк çĕкленӳпе хавхаланса Сталин тата ун сывăх соратникĕ Молăтăв йулташ патне саламлă çыру йама йышăнат.

Митинг хупăнсан та халăх час саланмарĕ. Нумай вăхăт „Ура!“, „Сывă пултăр аслă Сталин!“ тесе кăшкăрнă сасăсем хытă йанăраса тăчĕç.

Чăваш халăхĕн пысăк савăнăçĕ

1938 ç. майăн 25-мĕшĕнче Шупашкарти митингра йышăннă резолуци

Епĕр, Шупашкар хулинчи рабочисем, инженерла-техникла работниксем, наукă йенĕпе ĕçлекен работниксем тата пур ĕççыннисем, Аслă Ленин ĕçне туса пыракан — Иосиф Виссарионăвич Сталин тата унăн чи сывăх соратникĕсем — правительствă пуçлăхĕ Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Микойан тата Йежов йулташсем Чăваш Автономлă Социалисăмлă Советлă Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ панă май, пĕтĕм хулари митинга пухăнса хамăрăн савăнăçа, хавхалунăва палăртатпăр.

Пирĕн çĕршыв пирĕн хисеплĕ коммунисла партти, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе вăйлă, никам çĕнтерейми социалисăмла патшалăх пулса тăчĕ. Пирĕн çĕршывра, сталинла саманара пурăннинчен ытла, ССР Сойузĕнчи халăхсен куллешхи пурнăç йалине, социалисăм кĕрсе çитнĕ çĕршывра пурăннинчен ытла, тĕнчере урăх телей çук.

Çакăн пек телейлĕ пурнăç патне пире болшевиксен партийĕ, аслă Сталин, В. М. Молăтăв пуç пулса тăракан Совет правительстви илсе çитерчĕ.

Халăх тăшманĕсем—троцкисла-бухаринла тата буржуалă националисла бандитсем—фашисăм агенчĕсем тăван çĕршыва фашиссене сутма хăтланнă. Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсем шанчăклă сталинец Йежов йулташ йертсе пынипе, вĕсене тупса, çĕмĕрсе тăкнă.

Епĕр Аслă Сталин тата унăн сывăх соратникĕсем Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Микойан, Йежов йулташсем Чăваш АССР Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ панипе телейлĕ пултăмăр. Çакă вăл пире социалисăм строительствин пур участкисенче те хамăрăн çитĕнӳсене татах темиçе хут нумайлатма халăхсен сталинла туслăхне татах çирĕплетме, коммуниссемпе партире тăманнисен хăватлă блокне çирĕплетме хушат.

Епĕр, Шупашкар хулинчи ĕççыннисем, РСФСР тата Чăваш АССР Республикĕн Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене чаплăн ирттерме, суйлавсене пур суйлавçăсене хутшăнтарма тата тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн сасăлама, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлама пулатпăр.

Епĕр, Шупашкар хулинчи ĕççыннисем, коммуниссен партийĕ тавра, йуратнă тата хаклă Сталин тавра таччăн пĕрлешсе, виççĕмĕш пйатилеткă задачисене пурнăçа кĕртес çĕрте халиччен курман пысăк çитĕнӳсем тума пулатпăр.

Сывă пултăр аслă та никам çĕнтерейми Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ!

Сывă пултăр ССР Сойузĕнчи халăхсен никам çĕмĕрейми сталинла туслăхĕ!

Сывă пултăр Чăваш АСС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă пирĕн пĕррмĕш кандидат, пирĕн йуратнă çулпуç, тăван аттемĕр, Аслă Сталин!

Кăмаш суйлав округĕ

„Болшевик“ колхоз членĕсемпе Йакурушкĕн йалĕнчи йединоличниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, К. Йе. Ворошилăв, Л. М. Каганович, М. И. Калинин, А. И. Микойан, А. А. Андрейĕв, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов

йулташсен кандидатурисене тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Петр Матвейĕвич Матвейĕв

йулташ кандидатурине тăратнă

Çĕмĕрле районĕнчи „Болшевик“ колхоз колхозникĕсемпе Иакурушкĕн йалĕнчи йединоличниксен пĕрлехи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тĕнчери чи демократилĕ Конституцине туса паракана, Совет Сойузĕнчи халăхсен аслă çулпуçне Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташа тата унăн сывăх соратникесене В. М. Молăтăв, К. Йе Ворошилăв, Л. М Каганович, М. И. Калинин, А. И Микойан, А. А. Андрейĕв, А. А. Жданăв, Н И. Йежов йулташсене кандидата тăратас. Вĕсенчен баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтас.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Ленин—Сталин ĕçĕшĕн чĕререн тăракана, ПСК(б)П Çĕмĕрле райкомĕн бӳро членне, Çĕмĕрле райĕçтăвком председателне—1903 çулта çуралнă, Çĕмĕрлере пурăнат, — Петр Матвейĕвич Матвейĕв йулташа кандидата тăратас.

Матвейĕв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Кăмаш суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтас.

Катек суйлав округĕ

„Комсомол“ колхоз колхозникĕсемпе Чакаçри ĕççынни йединоличниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Андрей Александрăвич Жданăв

йулташ кандидатурине тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Константин Иванăвич Иванов

йулташ кандидатурине палăртнă

Канаш районĕнчи „Комсомол“ колхоз колхозникĕсемпе Чакаçри ĕççынни йединоличниксен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Епĕр, „Комсомол“ колхоз колхозникĕсемпе Чакаçри ĕççынни йединоличниксем, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Сталин йулташăн сывăх соратникне Андрей Александрăвич Жданăв йулташа кандитата тăрататпăр.

А. А. Жданăв йулташран РСФСР Верховнăй Советне Канаш суйлав округĕ тăрăх депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтатпăр.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Чăвашсен государствă академи театрĕн директăрне,— 1911 çулта çуралнă, комсомолец, Шупашкарта пурăнат,— Константин Иванăвич Иванов йулташа кандидата тăрататпăр.

К. И. Иванов йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне Катек суйлав округĕ тăрăх депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтатпăр.

Округсенчи суйлав умĕнхи канашлусен хроники

Патăрйел

Хирти Сĕнтĕр суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу пысăк хавхаланупа иртрĕ. Канашлăва суйлавçăсен представителĕсем хĕрлĕ йалавсемпе тата Сталин, Молăтăв, Ворошилăв, Каганович, Калинин, Йежов йулташсен портречĕсемпе пухăннă.

Канашлу Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата—ПСК(б)П Патăрйел райкомĕн çекретарне В. П. Чернов йулташа тăратрĕ.

Пăрачкав

Районри тăвата суйлав округĕсенче суйлав умĕнхи канашлусем пулса иртрĕç.

Чăваш АССР Верховнăй Советне Пăрачкав суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама кандидата Н. Н. Дреçасăв (республикри милици управлени начальникĕ), **Семенăвски** суйлав округĕ тăрăх А. С. Родионăв (Парачкав совхозĕн механикĕ), **Çийавă** округĕ тăрăх А. М. Гришинă (трактар бригадин бригадирĕ), **Рйапинă** суйлав округĕ тăрăх, П. И. Новикăвă (Лобачевă йалĕнчи пуçламĕш шкулти учителница) йулташсене тăратнă.

Кувакинă

Кувакинă, Кладбищĕнски тата **Турдакăвă** суйлав округĕсенчи суйлав умĕнхи канашлусенче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Кувакинă суйлав округĕнчен А В. Сомăва—ПСК(б)П Кувакинă райкомĕн çекретарĕ, **Кладбищенски** суйлав округенчен Ф Д. Защелкин — **Кувакинă** райĕçтăвкомĕн председателĕ, **Турдакăвă** суйлав округĕнчен А. К. Лебедевă—Иванăвă йалсовет председателĕ йулташсене палăртнă.

Елĕк

Елĕк суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата П. Ç. Меценатăвă йулташа тăратнă.

Васкасси суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата районри чи паллă тракторист Мирон Андрейевич Андрейĕва тăратнă.

Вутланти суйлав умĕнхи канашлу Вутлаç округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама райĕçтăвком председателĕн заместителне Т. П. Куликов йулташа тăратнă.

Сĕнтĕрвăрри

Шуршăл суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йакăвлĕв Çтепан Йакăвлĕвича тăратрĕ. Вăл Урхас Кушкă йалĕнчи „Звезда“ колхоз председателĕ.

Ĕсмĕл округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу пулса иртрĕ. Канашлу Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Иванов Артемий Ивановича тăратрĕ.

Наратчакки тата **Сĕнтĕрвăрри** суйлав округĕсенчи суйлав умĕнхи канашлусем те пулса иртрĕç. Ку округсенчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Й. И. Одинцов йулташа тата М. А. Андрейев йулташа тăратнă.

Турхан

Пашйел суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама И. З. Захарăв йулташ кандидатурине тăратнă. Арăпуç округĕнчен Д. А. Андрейĕв, Турхан округĕнчен В. С. Кириллăв йулташсене тăратнă.

Улатăр

Округсенчи суйлав умĕнхи канашлусем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратрĕç. **Улатăрти Ленинский** округ Л. С. Срасăв, **Улатăрти Кирăвски**—А. П. Иерофейĕв тата **чукунçул** округĕ—И. С. Мурашкин йулташсене.

Йелчĕк

Тĕмер суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама И. Н. Никифăрава, **Йелчĕк** округĕнчи—В. М. Немцĕва тата **Чăваш Тайапа** округĕнче Ф. Йа. Смирновăна тăратнă.

Шăхасан

Шуркасси суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата педагогикă ĕçĕн мастăрне Прасковйа Александрăвнă Григорйевăна тăратнă.

Ишлей

Шурча суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата ПСК(б)П райкомĕн çекретарне Г. И. Тепейĕв йулташа тăратнă.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиççисен председателĕсене йе çекретарĕсене хăйсен йаланхи ĕçĕсенчен хăтарасси çинчен

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ çапла йышăнат:

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиççисен председателĕсене йе çекретарĕсене 1938 çулхи майăн 23-мĕшĕнчен пуçласа ийунĕн 28 мĕшĕччен хăйсен йаланхи ĕçĕсенчен хăтарас, ĕçукçине йаланхи ĕçре тăнă çĕрте илмеле тăвас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ **З. АНДРЕЙĔВĂ.**

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çекретарĕ **Т. ВАÇИЛЙĔВ.**

Шупашкар хули. Майăн 23-мĕш 1938 çул.

Участкăсенчи суйлав комиççисен председателĕсене йе çекретарĕсене хăйсен йаланхи ĕçĕсенчен хăтарасси çинчен

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ çапла йышăнат:

Участкăсенчи суйлав комиççисен председателĕсене йе çекретарĕсене майăн 23-мĕшĕнчен пуçласа ийунĕн 27-мĕшĕччен хăйсен, йаланхи ĕçĕсенчен хăтарас, ĕçукçине йаланхи ĕçре тăнă çĕрте илмеле тăвас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ **З. АНДРЕЙĔВĂ.**

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çекретарĕ **Т. ВАÇИЛЙĔВ**

Шупашкар хули. Майăн 23-мĕш 1938 çул.

РСФÇР тата ЧАССР Верховнăй Совечěсене депутата суйлама Чăваш халăхě палăртнă кандидатсем

Йетěрне хула суйлав округě

Çу çапакан тата çпирт савăтěнчи рабочисемпе работницăсем, инженерла-техникла работниксем тата „Восток" колхоз колхозникěсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иосиф Виссарионăвич Сталин

тата

Федăр Максимăвич Ваганăв

йулташсен кандидатурисене палăртнă

Çу çапакан тата çпирт савăтěнчи рабочисемпе служăшчисен, инженерла-техникла работниксем тата „Восток" колхоз колхозникěсем йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Пухура 133 çын пулнă

Епěр, Йетěрнери çу çапакан тата çпирт савăтěнчи рабочисемпе служăшчисем, инженерла-техникла работниксем тата „Восток" колхоз колхозникěсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама халăхсен çулпуçне Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташа тата Чăваш халăхěн шанчăкла ывăлне, Йетěрнери çулйěр участкин начаљникě пулса ěçлекене Федăр Максимăвич Ваганăв йулташа—парти членě, Козловка поçолкинче пурăнать,—кандидата тăрататпăр.

Епěр И. В. Сталин тата Ф. М. Ваганăв йулташсенчен Чăваш АССР Верховнăй Советне Йетěрне хула суйлав округě тăрăх депутата суйланма баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтатпăр.

Улатăр чукун çул суйлав округě

Гармоњсем тăвакан хапрăкри рабочисемпе служăщчисем, инженерла-техникла работниксем ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв

тата

Иван Çергейěвич Мурашкин

йулташсен кандидатурисене палăртнă

УЛАТĂР. Гармоњсем тăвакан хапрăкри рабочисемпе служăшчисен инженерла-техникла работниксен суйлав умěнхи пухăвě пысăк хавăслăхпа иртрě. Пухура пулнисем пěр саслăн Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама совет правитěлствин пуçлăхне, Сталин йулташăн çывăх соратникне Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв йулташа тата гармоњ хапрăкěнчи палла стаханăвеçа Иван Çергейěвич Мурашкин йулташа кандидата палăртрěç.

Пуху хайěн резољуцийěнче В. М. Молăтăв тата И. Ç. Мурашкин йулташсенчен Чăваш АССР Верховнăй Советне Улатăр чукунçул хула суйлав округě тăрăх баллотировкăна тăма хайсен килěшўне пама ыйтать.

Хутар суйлав округě

Çěмěрле районěнчи Ленин йачěпе тăракан колхоз колхозникěсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Й. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. И. Микойан, Н. И. Йежов

йулташсен кандидатурисене тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Ваçили Михайлăвич Шишкин

йулташ кандидатурине палăртнă

Ленин йачěпе тăракан колхоз колхозникěсен суйлав умěнхи пухăвě йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Пухура 407 çын пулнă

Епěр РСФСР Верховнăй Советне пěрремěш депутата суйлама халăхсен генилě çулпуçне, ěççынисен тусěпе учитěлне, Ленин ěçне малала туса пыракана, тěнчери чи демократилě Конституцине туса паракана, социалисăм çěнтерěвěсен организатăрне Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташа кандидата тăрататпăр.

Çавăн пекех, епěр РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Сталин йулташăн çывăх соратникěсене, Ленин—Сталин ěçěшěн çирěппěн кěрешекенсене В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Й. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. И. Микойан, Н. И. Йежов йулташсене кандидата тăрататпăр.

Сталин, Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Микойан, Йежов йулташсенчен РСФСР Верховнăй Советне Çěмěрле суйлав округě тăрăх депутата суйланма баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтатпăр.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Чăваш республикěнчи партколлегин çекретарне Ваçили Михайлăвич Шишкин йулташа—1903 çулта çуралнă, вырăс, парти членě, Шупашкарта пурăнать,—кандидата тăрататпăр. Шишкин йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Хутар суйлав округě тăрăх баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтатпăр.

Вутлан суйлав округě

„Бољшевик" колхоз колхозникěсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Климент Йефремăвич Ворошилăв

йулташ кандидатурине тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Тимофей Порфирийěвич Куликов

йулташ кандидатурине тăратнă

Елěк районěнчи „Бољшевик" колхоз колхозникěсен пухăвě йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама ССР Сойузěн Оборонă Халăх Комиссарне, ССР Сойузěн пěрремěш маршăлне Климент Йефремăвич Ворошилăв йулташа кандидата тăратас.

К. Й. Ворошилăв йулташран РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Вăрнар суйлав округěнче баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтас.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Елěк райěçтăвком председатěлěн замеçтитěлне орденоносěц Тимофей Порфирйěвич Куликов йулташа кандидата тăратас.

Куликов йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Вутлан суйлав округěнче баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтас.

Каракла суйлав округě

„Броневик", „Хěрлě хěм" колхозсенчи колхозниксемпе Каракларн тата Асхвари ěççынни йединоличниксен пěрлехи пухăвěсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Кирил Куçмич Вастрўк

йулташ кандидатурине тăратнă

„Броневик" колхоз членěсемпе Каракларн йединоличниксен пěрлехи пухăвě йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне Каракла суйлав округě тăрăх депутата суйлама Чăваш АССР Сутуилў Халăх Комиссарне Кирил Куçмич Вастрўк йулташа,—1905 çулта çуралнă, ПСК(б) членě, Шупашкар хулинче пурăнать,—кандидата тăратас.

К. К. Вастрўк йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма Каракла суйлав округě тăрăх баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтас.

Мучар суйлав округě

Тăвай районěнчи „Горьковская Коммуна" колхоз колхозникěсен пухăвě ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иван Тимофейěвич Никитин

йулташ кандидатурине тăратнă

Колхозниксен пухăвě йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

1. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тăвай районěнчи Çěнě Ишинă йалěнчи Чапайěв йачěпе тăракан колхоз председатěлне Иван Тимофейěвич Никитин йулташа—1905 çулта çуралнă, Çěнě Ишинăра пурăнать,—кандидата тăратас.

И. Т. Никитин йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Мучар суйлав округěнче баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтас.

Нурăс суйлав округě

„Путь Ленина" колхоз колхозникěсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Сталин, Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, тата Йефимийă Борисăвнă Виноградăвă

йулташсен кандидатурисене тăратнă

ВĂРНАР. „Путь Ленина" колхозри суйлав умěнхи пуху пысăк çěкленўпе иртрě. Пухăва 163 çын пухăннă.

Чи малтанах пухура колхозник Кудрйавцěв йулташ сăмах тухса каларě. Пуху пысăк савăнăçпа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама халăхсен çулпуçě Сталин йулташпа унăн чи çывăх соратникěсене Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин йулташсене кандидата тăратрě.

Çавăн пекех пуху, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Йерможкинă йалсовет председатěлне Йефимийă Борисăвна Виноградăвă йулташа кандидата тăратрě.

Пуху ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсенчен Нурăс суйлав округěнче баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтрě.

Хучаш суйлав округě

„Новый быт" колхоз колхозникěсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Петр Çтепанăвич Полтěв

йулташ кандидатурине тăратнă

Йетěрне районěнчи „Новый быт" колхоз колхозникěсен пухăвě йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

1. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Ленин-Сталин партийěн тăрăшса ěçлекен бољшевика, чăваш халăхěн шанчăклă ывăлне, ПСК(б)П Чăваш Обкомěн йертсе пыракан парторгăнсен пайěн пуçлăхне Петр Çтепанăвич Полтěв йулташа кандидата тăратас.

2. П. Ç. Полтěв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Хучаш суйлав округě тăрăх баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтас.

Йетěрне йал суйлав округě

Йетěрне районěнчи „Смычка" колхоз колхозникěсем ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Илйа Захарăвич Лепешкин

йулташ кандидатурине палăртнă

„Смычка" колхоз колхозникěсен суйлав умěнхи пухăвě йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йетěрне районěнчи машинăпа трактăр станцинчи аслă агронома, колхоз уйхирěсенче тырпул тупăшне ўстерес тěлěшпе чěререн тăрăшса ěçлекене, Илйа Захарăвич Лепешкин йулташа—ПСК(б) Парти членě, Йетěрнере пурăнать, — кандидата тăратас.

И. З. Лепешкин йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Йетěрне йал суйлав округěнче баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтас.

Палтай суйлав округě

Буденнăй йачěпе тăракан колхоз членěсен пухăвě РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

И. В. Сталин, К. Й. Ворошилăв

йулташсен кандидатурисене Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Кçени Данилăвнă Йакимăвă

йулташ кандидатурине тăратнă

Йетěрне районěнчи Буденнăй йачěпе тăракан колхоз членěсен пухăвě йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

1. Епěр, Буденный йачěпе тăракан колхоз колхозникěсем, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама И. В. Сталин, К. Й. Ворошилăв йулташсен кандидатурине тăрататпăр.

И. В. Сталин, К. Й. Ворошилăв йулташсенчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Çěмěрле суйлав округě тăрăх баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтатпăр.

2. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йетěрнери спирт савăтěнче ěçлекен Кçени Данилăвнă Йакимăвă йулташа—1906 çулта çуралнă, парти членě, Йетěрне хулинче пурăнать,—кандидата тăрататпăр.

Йакимăвă йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланма Палтай суйлав округěнче баллотировкăна тăма хайěн килěшўне пама ыйтатпăр.

Çěмěрле хула суйлав округě

Çěмěрлери „Бољшевик" екстракт савăтěнчи рабочисемпе служăщчисем, инженерла-техникла работниксем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Й. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. И. Микойан, В. Йа. Чубарь, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов, А. А. Андрейěв

йулташсен кандидатурисене Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Верă Каçйанăвнă Каçйанăвă

йулташ кандидатурине палăртнă

„Бољшевик" савăтěнчи рабочисемпе служăшчисем, инженерла-техникла работниксен суйлав умěнхи пухăвě йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Пухура 430 çын пулнă.

1. Епěр, Çěмěрлери „Бољшевик" екстракт савăтěнчи рабочисемпе служăшчисем тата инженерла-техникла работниксем, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Й. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. И. Микойан. В. Йа. Чубарь, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов, А. А. Андрейěв йулташсене кандидата тăрататпăр. Кандидата тăратнă йулташсенчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Çěмěрле суйлав округě тăрăх баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтатпăр.

2. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата епěр чăваш халăхěн чи лайăх хěрне, Ленин—Сталин парти ěçěшěн чěререн тăрăшса ěçлекене, Çěмěрле комбинатěнчи стаханăвкăна,—1906 çулта çуралнă, Çěмěрлере пурăнать,—Верă Каçйанăвна Каçйанăвă йулташа тăрататпăр. Епěр Каçйанăвă йулташран Çěмěрле хула суйлав округěнче баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтатпăр.

Шупашкар хулинчи 2-мěш суйлав округě

Водопйанăв йачěпе тăракан тир-сăран савăчěпе атă-пушмак хапрăкěнчи рабочисемпе служăшчисем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Андрей Федăрăвич Кустăв

йулташ кандидатурине палăртнă

Водопйанăв йачěпе тăракан тир-сăран савăчěпе атă-пушмак хапрăкěнчи рабочисемпе служăшчисен пухăвěнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

1. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Ленин--Сталин парти ěçěшěн чěререн тăрăшса ěçлекене, Чăваш халăхěн шанчăклă ывăлне Андрей Федăрăвич Кустăв йулташа,—1901 çулта çуралнă, ПСК(б) Парти членě, стаханăвěц, Садвинтрест совхозěнче пурăнать,--кандидата тăратас.

Епěр Кустăв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата Шупашкар хула суйлав округě тăрăх депутата суйланма баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтатпăр.

Мăн Улхаш суйлав округě

„Красноармейěц" колхоз колхозникěсен пухăвě РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Сталин, Молăтăв, Ворошилăв, Жданăв, Йежов, Калинин, Каганович, Микойан, Чубарь, Андрейěв

йулташсен кандидатурисене тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Аниçийа Çеменăвнă Чекменевă

йулташ кандидатурине тăратнă

Çěмěрле районěнчи Мăн Улкашри „Красноармейěц" колхоз членěсен суйлав умěнхи пухăвě йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Пухура 300 çын пулнă

Епěр, „Красноармейěц" колхоз колхозникěсемпе колхозницисем, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Сталин, Молăтăв, Ворошилăв, Жданăв, Йежов, Калинин, Каганович, Микойан, Чубарь, Андрейěв йулташсен кандидатурине тăрататпăр.

Сталин, Молăтăв, Ворошилăв, Жданăв, Йежов. Калинин, Каганович, Микойан, Чубарь, Андрейěв йулташсенчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Çěмěрле суйлав округě тăрăх баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтатпăр.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Мăн Улхашри колхозницă-стаханăвкăна, партире мар, 43 çулта, йěтěн ăстаçи,—орденоноскă Аниçийа Çеменăвнă Чекменевă йулташа кандидата тăрататпăр.

Чекменевă йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне Мăн Улхаш суйлав округě тăрăх депутата суйланма баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтатпăр.

Хапăс тата Вăрнар суйлав округěсенче

„Трактор" колхоз членěсен суйлав умěнхи пухăвě РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иосиф Виссарионăвич Сталин,

тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Григорий Михайлăвич Гуçěв

кандидатурине тăратнă

Пухура 170 çын пулнă

Кўлхěрринчи „Трактор" колхозри колхозниксен суйлав умěнхи пухăвě йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Епěр, „Трактор" колхозри колхозниксемпе колхозницăсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Совет Сойузěнчи халăхсен, пěтěм тěнчери ěççыннисен çулпуçне, тěнчери чи демократилě Конституцине туса паракана, ПСК(б)П Тěпкомěн çекретарне Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташа палăртатпăр. Сталин йулташран РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Вăрнар суйлав округěнче баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтатпăр.

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Чăваш халăхěн чи лайăх ывăлне, социалисăмла тăван çěршывшăн чěререн тăрăшса ěçлекене, райěçтăвком председатěлне, Григорий Михайлăвич Гуçěв йулташа палăртатпăр.

Гусěв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Хапăс суйлав округěнче баллотировкăна тăма килěшў пама ыйтатпăр.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама Чăваш халăхĕ палăртнă кандидатсем

Шуршăл суйлав округĕ

„Çăлтăр“ колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Зойа Ананийĕвнă Андрейĕвă

йулташ кандидатурине тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Çтепан Йакăвлĕвич Йакăвлĕв

йулташ кандидатурине палăртнă

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Çăлтăр“ колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

РСФСР Верховнăй Советне Çĕрпÿ суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателне Зойа Ананийĕвна Андрейĕвă йулташа—1899 çулта çуралнă, 1925 çултанпа партире тăрат, Шупашкарта пурăнат,—кандидата тăратас.

Епĕр Андрейĕвă йулташран Çĕрпÿ суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтатпăр.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама хамăран „Çăлтăр“ колхоз председателне Çтепан Йакăвлĕвич Йакăвлĕв йулташа—1908 çулта çуралнă, партире тăмаст, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Урхас Кушкă ялĕнче пурăнат,—кандидата тăрататпăр.

Йакăвлĕв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Шуршăл суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтатпăр.

Çавалкасси суйлав округĕ

Вăрнар районĕнчи „Çутала“ колхоз колхозникĕсем ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Сталин, Каганович, Ворошилăв, Йежов, Калинин тата Николай Макçимăвич Храмкин

йулташсен кандидатурисене тăратнă

„Çутала“ колхоз колхозникĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама И. В. Сталин йулташа унăн чи çывăх соратникĕсене Каганович, Ворошилăв, Йежов, Калинин йулташсене тата Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн тăрăшса ĕçлекене, Вăрнарти машинăпа трактăр станцин директăрне—орденоносĕц Николай Макçимăвич Храмкин йулташа—1902 çулта çуралнă, ПСК(б)Парти членĕ, Вăрнар посолкинче пурăнат,—кандидата тăратас.

Колхозникçемпе колхозницăсен пухăвĕ Сталин, Каганович, Ворошилăв, Йежов, Калинин тата Храмкин йулташсенчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Çавалкасси суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтат.

Шупашкар хулинчи 2-мĕш суйлав округĕ

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçула тата çĕнĕ савăт строительствисенчи, Стройтрестри, атă-пушмак хапрăкĕнчи, макарон хапрăкĕнчи, совхозри рабочисен, инженерсен, техниксен, государствă педагогикă институтĕнчи, йалхуçалăх институтĕнчи, йалхуçалăх коммунисла аслă шкулĕнчи, йалхуçалăх тата педрабфаксенчи студентсен, профессăрсемпе преподавателсен, çавăн пекех Шупашкар хулинчи иккĕмĕш суйлав округне кĕрекен ытти общĕствăлă организацисен пĕрлешÿлĕ пухăвĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв

йулташ кандидатурине палăртнă

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул тата çĕнĕ савăт строительствисенчи, стройтрестри, атă-пушмак хапрăкĕнчи рабочисен инженерсемпе техниксен тата хулари аслă шкулсенчи студентсен, профессăрсемпе преподавателсен тата Шупашкар хулинчи 2-мĕш суйлав округне кĕрекен ытти общĕствăлă организацисен пĕрлешÿлĕ пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Пухура 3000 çын пулнă

1. Шупашкар хулинчи 2-мĕш суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама большевиксен партин шанчăклă ывăлне, Ленинăн тата пирĕн аслă çулпуçăн, учителĕн, пĕтĕм ĕççыннисен çывăх тусĕн Сталин йулташăн çывăх соратникне — рабочисемпе хресченсен правительствин пуçлăхне, ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председательне Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв йулташа — 1890 çулта çуралнă ПСК(б)П членĕ, Мускав хулинче пурăнат,—кандидата тăратас.

2. Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв йулташран Шупашкар хулинчи 2-мĕш суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма хăйĕн килĕшÿне пама ыйтас.

Куславкка суйлав округĕ

Куславкка комбинатĕнчи рабочисемпе служăшчисен, инженерла-техникла работниксен пухăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Александра Александрăвнă Фирсăвă

йулташ кандидатурине тăратнă

Рабочисемпе служăшчисен, инженерла-техникла работниксен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

1. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Куславкка комбинатĕнчи стаханăвкăна Александра Александрăвнă Фирсăва йулташа —1919 çулта çуралнă, ПСÇЛКС членĕ, Куславкка посолкинче пурăнат, — кандидата тăратас.

2. А. А. Фирсăвă йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Куславкка суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтас.

Улатăр суйлав округĕ

Куванинă районĕнчи Турдаковă йалсоветĕнчи „Хĕрлĕ Октябĕр“ колхозри колхозниксемпе колхозницăсен суйлав умĕнхи пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Александр Василйĕвич Сомăв

йулташ кандидатурине палăртнă

Пухура 423 çын пулнă

Турдаковă йалсоветĕнчи „Хĕрлĕ Октябĕр“ колхоз колхозникĕсемпе колхозницăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

„Хĕрлĕ Октябĕр“ колхозри колхозниксен пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата ПСК(б)П Куванинă райкомĕн çекретарне Александр Ваçилйĕвич Сомăв йулташа палăртат.

Пуху А. В. Сомăв йулташран РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Улатăр суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтат.

Шĕнер суйлав округĕ

„Машиностройʼ“ колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иосиф Виссарионăвич Сталин

тата

Зойа Ананийĕвнă Андрейĕвă

йулташсен кандидатурисене тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Тимофей Ваçилйĕвич Ваçилйĕв

йулташ кандидатурине тăратнă

„Машиностройʼ“ колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Çĕрпÿ суйлав округĕ тăрăх тĕнчери чи демократиллĕ Конституцие тăвакана Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташа тата Чăваш халăхĕн йуратнă хĕрарăмне, Чăваш Тĕпĕçтăвком председателне Зойа Ананийĕвна Андрейĕвă йулташа, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Шĕнер суйлав округĕ тăрăх Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн çекретарĕ пулса ĕçлекен Тимофей Ваçилйĕвич Ваçилйĕв йулташа тăратас.

Иосиф Виссарионăвич Сталин тата Зойа Ананийĕвна Андрейĕвă йулташсенчен Çĕрпÿ суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама, Тимофей Ваçилйĕвич Ваçилйĕв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Шĕнер суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтас.

Çĕмĕрле суйлав округĕ

Иетĕрне районĕнчи „Коминтерн“ колхоз членĕсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Алекçей Афанаçйĕвич Малинин

йулташ кандидатурине тăратнă

„Коминтерн“ колхоз членĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

1. РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама чăваш халăхĕн шанчăклă ывăлне, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн парăнса ĕçлекене, Йетĕрне райĕçтăвком председателне Алекçей Афанаçйĕвич Малинин йулташа—1898 çулта çуралнă, Йетĕрне хулинче пурăнат,—кандидата тăратас.

2. А. А. Малинин йулташран РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтас.

Уравăш суйлав округĕ

„1 мĕш Май“ колхоз колхозникĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Йефроçинийă Харитонăвнă Харитонăвă

йулташ кандидатурине палăртнă

Вăрнар районĕнчи „I-мĕш Май“ колхоз колхозникĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Вăрнарти машинă-трактăрла станцин чи лайăх стаханăвкине, хĕрарăмсен трактăрлă бригадин бригадирне Йефроçини Харитонăвнă Харитонăвă йулташа — 1916 çулта çуралнă, ПСÇЛКС членĕ, Çĕнйалкассинче пурăнат,—кандидата тăратас.

Й. Х. Харитонăвă йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Уравăш суйлав округĕнче баллотировкăна тăма хăйĕн килĕшÿне пама ыйтас.

Кипек суйлав округĕ

„Канаш“ колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Борис Илларионăвич Йениçейĕв

йулташ кандидатурине тăратна

Чулкăмакари „Канаш“ колхоз колхозникĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

1. Епĕр Шăхасан районĕнчи „Канаш“ колхоз колхозникĕсем, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама ПСК(б)Партин шанчăклă ывăлне, Шăхасанти машинăпа трактăр станцин директăрне Борис Илларионăвич Йениçейĕв йулташа кандидата тăрататпăр.

Б. И. Йениçейĕв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Кипек суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтатăр.

Патăрйел суйлав округĕ

Сталин йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Леонтий Давыдăвич Острйаков

йулташ кандидатурине тăратнă

Пухура 125 çын пулнă

Çĕнĕ Ахпÿртри Сталин йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Епĕр, Çĕнĕ Ахпÿртри Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем, Патăрйел суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата партире мар большевика, „Хĕрлĕ Туçа“ колхоз председателне, орденоносĕца Леонтий Давыдăвич Острйакова палăртатпăр.

Пуху Острйаков йулташран РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Патăрйел суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтат.

Вăрнар суйлав округĕ

Булатăвăри Молăтăв йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иван Василйĕвич Дубăв

йулташ кандидатурине палăртнă

Пухура 101 çын пулнă

Булатăвăри Молăтăв йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

1. РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама парти Чăваш Обкомĕн çекретарне Иван Ваçилйĕвич Дубăв йулташа кандидата палăртас.

2. Пуху И. В. Дубăв йулташран РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Вăрнар суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтат.

Турай суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

Турай суйлав округĕнчи общĕствăлă организацисен, колхозсен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕнче РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Сталин, Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Андрейĕв, Микойан, Жданăв, Йежов, Чубарь тата Калинкинă

йулташсен кандидатурисене тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Ваçилий Данилăвич Данилăв

йулташ кандидатурине палăртнă

ТУТАРКС. Майăн 21-мĕшĕнче Турай суйлав округĕнчи колхозсен, общĕствăлă организацисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ пулчĕ. Канашлăва 142 çын пухăннă. Канашлăва Чемей ялсоветĕнчи „Сентель“ колхоз председателĕ Йевгени Андрейĕв уçнă. „Стражь революции“ колхозри колхозник Максим Çтепанăвич Çтепанăв йулташ колхозсенчи суйлав умĕнхи пухусенче РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Йе. Ворошилăв, М. А. Калинин, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов, В. Йа. Чубарь тата Прасковйа Ивановна Калинкинă йулташсен кандидатурисене тата Чăваш АССР Верховнăй Советне Турай суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама Ваçилий Данилăвич Данилăв йулташ кандидатурине хута кĕме чĕнсе, сăмах тухса каланă.

Тутаркас районĕнчи Турай суйлав округĕнчи колхозсен тата общĕствăлă организацисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

1. Епĕр, Турай суйлав округĕнчи колхозсен тата общĕствăлă организацисен пухăвĕсенчен суйласа йанă представителсем, округри суйлав умĕнхи канашлăва пухăннă 142 çын, колхозсенчи суйлав умĕнхи пухусенче РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Йе. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, А. А. Жданăв Н. И. Йежов, В. Йа. Чубарь тата П. И. Калинкинă йулташсен кандидатурисене пĕтĕмпех ырласа йышăнатпăр.

2. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама орденоносĕца, Чемей йалсоветĕнчи „Стражь революци“ колхоз председателĕн заместительне Ваçилий Данилăвич Данилăв йулташа—ПСК(б)П Парти кандидачĕ. Çĕмĕртлĕх йалĕнче пурăнат, 1910 çулта çуралнă,—кандидата тăрататпăр.

3. И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Йе. Ворошилăв М. И. Калинин, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, В. Йа. Чубарь, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов тата П. И. Калинкинă йулташсенчен Шупашкар суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтатпăр.

Ваçилий Данилăвич Данилăв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне Турай суйлав округĕ тăрăх депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтатпăр.

Шĕнер суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

ÇĔРПŸ. (Хамăр корр). ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шĕнер суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу майăн 24-мĕшĕнче пулса иртрĕ. Канашлăва колхозсенчен суйласа йанă представителсем 300 çын ытла пухăнчĕç.

Канашлăва „Балтиец“ колхоз председателĕ И. М. Михайлăв йулташ уçрĕ. Канашлура И. Н. Николайĕв („Майăн 1-мĕш“ колхозри 63 çулхи колхозник), К. Филиппăвă („Красный Путиловец“ колхоз) тата ытти йулташсем те тухса каларĕç.

Тухса калакансем пурте суйлавçăсен кăмăлне хисепе илсе, Çĕрпÿ суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама З. А. Андрейĕвă, Шĕнер суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Т. В. Ваçилйĕв йулташсен кандидатурине сĕнчĕç. Канашлу çак кандидатурăсемшĕн тăма пулса резолюци йышăнчĕ.

И. Н. Николайĕв йулташ сăмахĕ

Йулташсем! Ейĕк те „суйлавсем“ пулнă. Анчах та чухăнсем, хĕрарăмсем тата ытлай чухне вăтамсем те суйлава хутшăнайман. Пуйансене пуйансем, пупсене пупсем суйланă ун чухне. Ерех хыççăн кайнипе пуйансен аллине лекнĕ çынсем пуйансемшĕн сасăлани те сахал мар пулнă.

Халĕ пурте суйлава каррăн хутшăнатпăр, Сталинла Конституци хĕрарăмне те, арçынне те пĕр пек правасем пачĕ. Епĕр РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен депутачĕ пулма чи тĕрĕс ĕçлекен çынсене, хамăршăн тăрăшакансене палăртатпăр. „Майăн 1-мĕш“ колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче епĕр РСФСР Верховнăй Совет депутатне суйлама К. Йе. Ворошилăв, М. И. Калинин йулташсен кандидатурисене палăртрăмăр. Çавăн пекех ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйлама кандидата Т. В. Ваçилйĕв йулташа тăратрăмăр.

Епĕр ийунĕн 26-мĕшĕнче пурте пĕр çын пек пулса, суйлав участкисене пырса, тăван çĕршыв интересĕсемшĕн кĕрешекенсемшĕн хамăр сасăсене паратпăр (ал çупасçĕ).

Сывă пултăр пире пуйан та кулътурлă пурнăç туса паракан Сталин йулташ. (Алă çупасçĕ).

Шĕнер суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу йышăнна

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Епĕр, орденлă Чăваш республикĕнчи Шĕнер суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлăва пухăннă представителсем, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене депутатсем суйлама кандидатсем тăратна май, хамăрăн политикăла тата моральлĕ пĕрлĕхе, Ленин—Сталин партине йуратнине, Сталин йулташа йуратнине кăтартса паратпăр. Çак хаклă йата асăнса епĕр, суйлавçăсем, пире телейлĕ, кулътурăлă тата савăнăçлă пурнăç туса панăшăн большевикла партине чĕререн тав тăватпăр. Епĕр хамăрăн вăйа тата пултарулăха тăван çĕршыва сыхлас, ĕçе социализм ĕçне пама хатĕр тăни çинчен шантарса калатпăр.

Коммуниссен партийĕ йертсе пынипе Совет Сойузĕнчи халăхсем троцкисла-бухаринла тата буржуала-националисла тăшмансене çапса салатрĕç. Çĕрĕн улттăмĕш пайĕнчен пĕр пайĕнче социалисăм чечекленет.

Çитес суйлавра епĕр хăйсен пĕтĕм чĕрипе тăрăшса, пурнăçне шеллемесĕр халăхсен телейлĕ пурнăçĕшĕн, социалисăмшăн тăрăшса ĕçлекен партири тата партире мар большевиксемшĕн сасăлатпăр.

Чăваш халăхĕ Верховнăй Советсене депутата суйлама кандидатсем тăратнă май, хаклă Сталинăн йачĕпе пĕрлех, В. М. Молăтăв, М. И. Калинин, К. Йе. Ворошилăв, Л. М. Каганович, Н. И. Йежов, А. А. Жданăв, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, А. Йа. Чубарь йулташсен йачĕсене асăнат. Епĕр хамăр сасăмăрсене Сталин йулташăн тата унăн чи çывăх соратникĕсемшĕн парса, хамăрăн граждăнла пысăк тивĕçе телейлĕн пурнăçа кĕртме хатĕр тăратпăр.

Епĕр, округри суйлав умĕнхи канашлăва пухăннă представителсем, округа кĕрекен колхозсенчи колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче Çĕрпÿ суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă Зойа Ананийĕвнă Андрейĕв тата Шĕнер суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă Тимофей Ваçилйĕвич Ваçилйĕв йулташсен кандидатурисемшĕн тăратпăр.

Канашлу З. А. Андрейĕвă йулташран Çĕрпÿ суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата тата Т. В. Ваçилйĕв йулташран Шĕнер суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтат.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПСК(б)П хула комитечĕн отчочĕ

Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ, Чăвашсойуз, Чебторг, Чăвашторг, Коопинсойуз çумĕнчи пуçламĕш парторганизацисен пĕрлешӳлĕ пухăвĕ икĕ кун хушши ПСК(б,П Шупашкар хула комитечĕн отчотне сӳтсе-йаврĕ. Пухури 40 коммунисран 20 çын пренире тухса каланă.

ПСК(б)П хула комитечĕ Шупашкар парторганизацине троцкиссенчен, бухаринцăсенчен, буржуаллă-националиссенчен тата ытти тăшмансенчен тасатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. Анчах Шупашкар хула комитет ĕçĕнче йанăшсем те пулнă. Осоавиахим Тĕп Совечĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче пĕр пухурах 4 çынна (Александрăв, Биктимирăв, Бельаков, Люминарски йул.) партирен кăларнă. Чукунçул строительстви çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче те çавăн пекех пĕр пухура 3 çынна партирен кăларнă. Чăвашсойуз çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче Çтепанăв йулташа кандидат картăчкине иличченех выгăвăр пама ĕлкĕрнĕ. Мальцĕв йулташа та ним сăлтавсăрах партирен кăларса пăрахнă. Çав вăхăтрах Чăвашсойуз правлени председателĕ пулса ĕçленĕ Сапожникăва парти ретĕнче хăварнă.

Хула комитечĕ хăшпĕр коммуниссене (Быслйаков — коопинсойуз, Бабинцĕв—тир-саран савăчĕн директăрĕ тата ыт.) елекçĕсем хыççăн кайса партирен кăларса пăрахнă. Халĕ ку йанăшсене тӳрлетнĕ. Хула комитечĕ хайĕн решенийĕсене тепĕр хут пăхса тухса 6 çынна парти ретне тавăрнă, тĕрĕс мар панă выгăвăрсене пăрахăçа кăларнă.

Пуçламĕш парторганизацисене йертсе пырас ĕçе вăйлатнă. Çулталăк хушшинче хула комитечĕ 42 пуçламĕш парторганизацисен отчочĕсене итленĕ, вĕсене татăклă кăтартусем панă. Парторгсемпе канашлусем ирттерессине лайăхлатнă. 1937—38 çулсенче 47 çынна парти кандидатне илнĕ, 55 çынна кандидатран парти членне куçарнă, 40 çынна сочувствуйушчисен ретне илнĕ. Çĕнĕрен 12 пуçламĕш парторганизаци тунă.

Хула комитет ĕçĕнче çитменлĕхсем чылайах-ха. Хула комитечĕн инструктăрĕсем пуçламĕш парторганизацисенче сахал пулаççĕ, вĕсене куллен ĕçре пулăшса, вĕрентсе пыни çук. Парторг замеçтителĕсемпе ĕçлессине манăçа хăварнă. Вĕсемпе пĕр канашлу çеç туса ирттернĕ. Пуçламĕш парторганизацисен отчотпа суйлав пухăвĕсенче 50 процент, парторгсем улшăнни, хула комитечĕ пуçламĕш парторганизацисене çителĕклĕ йертсе пыманнине кăтартать. Уйрăм парторганизацисенче парти хуçалăхне йапăхтарса йанă. Макарон хапрăкĕнче Ломахин парторг парти членĕсемпе кандидатсене учота илсе пымали инструкцине çухатнă. Леспромхозри парторг парти докуменчĕсене пигĕрмен шкапра усранă. Шупашкар парторганизацисенче 14 коммунис парти докуменчĕсене çухатнă. Вăл шутран Йуçтици Халăх Комиссариачĕпе Совет прави шкулĕнчи коммуниссем 6 документ çухатнă.

Партин шалти демократине пăснисем те пулнă. Хула комитечĕн çекретарĕ пулса ĕçленĕ Çмирнов йулташ хăй тĕллĕн хула комитет бӳровĕ йышăнна решенисене улăштарнă, протоколсене урăх майлă тӳрлетнĕ. Сăмахран, ПСÇЛКС Шупашкар хула комитечĕн çекретарĕ пулса ĕçленĕ Чикмарев йулташа хула комитет бӳровĕ йатламала тунине, Çмирнов йул. „Хытă йатламала" тесе протоколра тӳрлетнĕ.

Йалхуçалăх институтĕнче, коммунисла йалхуçалăх шкулĕнче партин уçă пухăвĕсенче президиума суйланă чух комсомолецсем, сочувствуйушчисем сасăлаççĕ.

Парти вĕрентĕвĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур. Шупашкарти коммуниссенчĕн 85 проц. анчах парти вĕрентĕвне хутшăнтарнă. Вĕренӳ пахалăхĕ çителĕксĕр. 96 коммунис ИМЗО çумĕнче заочнă вĕренме çыраннă. Вăл шутран 62 коммунис çеç вĕренӳ планне пурнăçлаççĕ. 34 коммунис 2—5 темăсемпе зачотсем паман.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ май хула комитечĕ 75 çынна вунă кунлă агитатăрсен курсĕ урлă вĕрентсе кăларнă. Çавăн пекех çтена хаçат редактăрĕсене курсра вĕрентнĕ. Хальхи вăхăтра 35 агитколлектив ĕçлет. Анчах политикăлла агитаци ĕçне промертелсенче начар лартнă. Кожупрйаж, Ленин йачĕпе тăракан ертелсенче суйлав Положенисене вĕренме те тытăнман. Килхуçи арăмĕсем хушшинчи ĕç те начар пырать.

Докладчик Калинкинă йулташ та, пренире тухса калакансем те, суту-илӳ ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен чарăнса тăчĕç. Суту-илӳ ĕçĕнче тăшмансем сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтересси питĕ йерипен пырать. Çийелтен пăхсан суту-илӳ организацисем хăйсен планĕсене тултараççĕ темеле, çав вăхăтрах кирлĕ йапаласене тупса илме çук. Хальхи вăхăтра темле шырасан та, стакан, витре, пачкă тата ыт. Шупашкар магазинĕсенче тупайман. Хăш чухне складсенче пур таварсенех магазинсенче сутмаççĕ. Столовăйсем йапах ĕçлеççĕ. Сăкăр начар пĕçереççĕ. Растратăсем нумай. Кăçал 50 пин тенкĕ растратă тума та ĕлкĕрнĕ. Суту-илӳре тĕрĕсленмен çынсене лартаççĕ. Суту-илӳ ĕçĕнче ĕçлекен коммуниссем çак йурахсăр ĕçсемпе начар кĕрешеççĕ. Чебторг директăрĕ Братчикăв йулташ: складсем сахал, магазинсем йусавлă мар тесе, пĕрремĕш номĕрлă магазинра ĕçлекен Сисикина йулташ: суту-илӳ работникĕсене ĕç укçи сахал пăраççĕ, плансем пысăк, вĕсене тултарма май çук, тесе хăйсен начар ĕçĕсене витсе хăварма пăхрĕç. Чăвашсойуз правлени председателĕ пулнă Чернов йулташ та сутуилӳ ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтермели майсем çинчен каламарĕ. Суту-илӳ ĕçĕнче лайăх ĕçлекен çынсем çук мар, пур. Анчах вĕсен ĕç опычĕсене сарма тăрăшни çук.

Пуху суту-илӳ ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме татаклă решени йышăнчĕ. Хула комитет ĕçне çителĕклĕ тесе хак пачĕ.

П. Перлов.

Обком отчотне итлерĕç

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕ майăн 23-мĕшĕнче уçăлчĕ.

Пухăва коммуниссем пӳрте пухăннă (93 член 69 кандидат).

Обком отчотне итленĕ хыççăн, майăн 24-мĕшĕнче ирхи ларура отчот тăрăх пренисем пуçланнă. Пурĕ 21 çын тухса калана. Тухса калакансем Обкомăн кивĕ руководстви халăх тăшманĕсемпе кĕрешес выранне, вĕсен ĕçĕсĕне тĕрлĕ майпа витсе пынине тĕслĕхсемпе катартаççĕ. Çавăнпа пĕрлех, Обкомăн çĕнĕ руководстви ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1937 çулти февраль-мартри пленумĕн решенисене тата çав пленумра Сталин йулташ каланисене пурнăçласа партипе совет организацисене клас тăшманĕсенчен тасатас, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернине палăртаççĕ.

Пренире тухса калакан йулташсем уйрăмах—парти Обкомĕн пропагандăпа агитаци, шкул, советпа суту-илӳ пайĕсем çителĕксĕр ĕçленине палăртаççĕ.

Парти пухăвĕ ПСК(б)П Обкомĕн ĕçне вăтам, политикăлă çулйĕрне тĕрĕс тесе йышăнна.

Мельникăв.

Куславкка

КУСЛАВККА, майăн 25-мĕш. Ĕнер кунта райпарторганизаци пухăвĕ уçăлчĕ. Пуху уçăлнă тĕле организацири 177 коммунисран 131 коммунис анчах пырса çитнĕ. 36 çын нимĕнле сăлтавсăр пыман.

Парти Обкомĕн ĕçĕсем çинчен Обком çекретарĕ Павлăв йулташ отчот тунă.

Хыттăн тишкерсе суйларĕç

ТУРХАН (хамăр корр.). Майăн 22-мĕшĕнче, каçхине, партин районри пухăвĕ хупăнчĕ. Вăл кув кунĕпех суйлавсем пычĕç. Малтан райком составне суйларĕç. Вăрттăн сасăлама тăратнă кандидатурăсене хыттăн тишкерсе сӳтсе-йаврĕç. Райкомăн çĕнĕ составне 9 çын суйласа хăварчĕç. Вĕсенчен райкомăн кивĕ составĕнче ĕçленисем 4 çынн.

Виçĕ члентан ревизи комиççи суйларĕç.

Парти Облăçри конференцине кайма сасăлакан сасăпа 3 делегат, канашлакан сасăпа 1 делегат суйларĕç. Сасăлакан сасăпа делегата С. Карташов (Обком), Д. Андрейĕв тата Волкăв йулташсене, канашлакан сасăпа Ларионăв (райĕçтавком) йулташа суйларĕç.

Майăн 22-мĕшĕнчех парти райкомĕн çĕнĕ составĕн пирвайхи ларăвĕ пулса иртрĕ. Ларура райком çекретарĕсене суйларĕç. Парти райкомĕн пĕрремĕш çекретарне Волкăв йулташа лартрĕç. Вăл унччен Шăнкăртам районĕнче райкомăн иккĕмĕш çекретарĕ пулса ĕçленĕ. Парти райкомĕн иккĕмĕш çекретарне — Николайĕвă йулташа, виççĕмĕш çекретарне Соколов йулташа суйларĕç.

И. Алтын—Баш.

Мускав-Атăл каналĕн флотилийĕ Кремль çтени патĕнче.
Е. Йевзерихин фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Испанири фронтсенче

Вăтаçĕрти тинĕс çыранне тухса, интервентсемпе пăлхавçăсем хĕвелтухăç фронтĕнче Каталонипе республикăна пĕр-пĕринчен уйарса тăракан территорине аслăлатас теллеве лартнă.

Çурçĕр йенчеле — Тортоса патнеле малала кайма хăтланни ăнăçлă пулман пирки, пăлхавçăсен çарĕсем апрел уйăхĕн вĕçĕнче республикăн Кастельон дела Плана—Алаига—Теруел хушшинче тăракан çарĕсем çине атакăсем тунă. Пысăк çухатусем туса, çапăçу пынă „çĕрте çĕнĕрен çĕнĕ подкреплениcем илсе пырса, пăлхавçăсемпе интервентсем çав вăхăтра кăштах малала кайма пултарнă. Анчах кашни наступлени тумассеренех, фашиссем умне пысăкран та пысăк йавăрлăхсем тухса пыраççĕ, мĕншĕн тесен республиканĕçсем йенчен вĕсене хирĕç хыттăн тăрасси ӳснĕçем ӳссех пырать. Хĕвелтухăçри фронтра нумай çектăрсенче республика çарĕсем тăшман тăвакан йышлă атакăсенчен хăйсене ăнăçлăн хӳтĕлеççĕ кăна мар, вĕсем тата хӳтĕленессинчен наступлени çине те куçаççĕ. Майăн 23-мĕшĕнче республиканĕçсем Пиедрас де Аоло-на йышăнна, ăна йышăннă чухне вĕсем нумайĕшне тыткăна илнĕ тата хĕçпăшалсем нумай туртса илнĕ. Республикă çарĕсем Балагертен Тромпа тата Льаворсине кайакан çула татнă. Республикă çарĕсен ытти темиçе чаçĕсем Бадаулль (Рубиес районĕнче) патне çывхарса пыраççĕ.

Йулашки вунă кун хушшинче хĕвелтухăç фронтĕнче уйрăмах республикă авиацийĕ активлăн çапăçать. Йулашки ернере кăна фашиссен 22 самольот пĕтнĕ, çав вăхăтра, республиканĕçсен—4 самольот çеç пĕтнĕ. Пĕтĕмпе, çав вунă кун хушшинчĕ, фашиссен сахалтан та 45 самольот пĕтнĕ.

Майăн 23 мĕшĕнче сывлăшра çапăçу пулса иртнĕ. Республиканĕçсем фашиссен 4 самольотне персе антарнă, республиканĕçсен пĕр самольот кăна пĕтнĕ. (ТАСС).

Чехословакири фашисăма хирĕç кĕрешекен партисен пысăк çитĕнĕвĕ

Майăн 22-мĕшĕнче Прагă хулинче тата Чехословакири 177 общинăра муниципалитетсен (выранти тытăмсен органĕсен) суйлавĕсем пулса иртнĕ.

Суйлавсен итогне тусан, фашисăма хирĕç кĕрешекен нумай йышлă партисем чылай сасăсем илни курăннă: чехсен социалисла партийĕ (президент Бенеш партийĕ) 142.430 сасă илнĕ; коммунисла парти—90.373; Чехословакири социал-демократла парти—77.530 сасă илнĕ.

1935 çулхипе танлаштарсан, суйлавсенче сасăсем илес йенпе чехсен социалисла партийĕ 27 процент ӳсĕм тунă коммунисла парти—13 проценг.

Прагăри муниципалитет суйлавĕсенче Чехословакири коммунисла парти пысăк çĕнтерӳ тунă, мандатсен хисепĕпе вăл иккĕмĕш выран йышăннă, 1931 çулхи суйлавсем хыççăн вăл тăваттĕмĕш выранта тăнă.

Реакцилĕ партисем чылай сасăсем çухатнă. Сăмахран, нумай йышлă капиталисла реакцилĕ парти—„Народная с"едноцени" тата фашиссен „Национальная лига" текенни 47 пин сасă ытла çухатнă. Генлейновĕçсем (Германи фашисĕсен Чехословакири агентури) нимĕç общинисенче кăна йышла сасă илме пултарнă, ăна та фашисла террăр тунипе тата вăрттăн сасăлас йĕркене пăсса ĕçлевипе илнĕ.

Чехословаки пичечĕ суйлав результачĕсене Чехословакири халăхсем хушшинчи фашисăма хирĕç кĕрешекен сарлака массăсен çĕнĕ çĕнтерĕвĕ выранне хурса хакласа çырать.

Хаçатсем уйрăмах Коммунисла парти Прагăра тунă çĕнтерӳ çинчен паллă туса çыраççĕ. Коммунисла парти унта 100 пин сасăна йахăн илнĕ. Хаçатсем ăнлантарса панă тăрăх, коммунисла парти çав çĕнтерĕве вăл республикăна тата правительствăн государствă оборонине çирĕплетес тĕлĕшпе тăвакан ĕçĕсене пулăшас тĕлĕшпе çирĕп линн тытса ĕçлесе пынипе тунă. „Коммунисла партин çĕнтерĕвĕн ăнăçĕвĕ,—тесе çырать правительствă хаçачĕ „Прагер Прессе",—вăл республикăна хӳтĕлес тата унăн никама пăхăнса тăманлăхне хӳтĕлес политикăна пулăшса ĕçлесе пынинче пулать."

ХУШСА ÇЫРНИ

Колхоз председателĕсен, МТС директăрĕсен, зоотехниксен, агрономсен тата выльăх тухтăрĕсен канашлăвĕсене пухмали ПЛАН*)

Канашлăва ăмăртса ĕçлекен районсемпе пĕрле иртерес. Канашлăва çак ыйтусем тăрăх иртерес: колхозсемпе МТС-сенче çураки вăхăтĕнчи ăмăртса ĕçленин итогĕсем; чуптару кампани; тырпулсене уйран пуçтарса кĕрес кампанине хатĕрленесси.

Районсен йачĕсем	Канашлăва пухмали выран	Канашлăва пухмали кун
Вăрнар Йĕпреç	Сталин йачĕпе тăракан колхоз (Кольцовкă)	Майăн 29-мĕш
Канаш Шăхасан	Кирăв йачĕпе тăракан колхоз (Атнаш)	Майăн 29-мĕш
Улатăр Кувакинă Пăрачкав	Кувакинă, „Пролетарий" колхоз	Майăн 30-мĕш
Патăрйел Йелчĕк	Шмидт йачĕпе тăракан колхоз,	Майăн 27-мĕш
Куславкка Сĕнтĕрвăрри	„Динамо" колхоз, Куславкка районĕ	Майăн 30-мĕш
Турхан Шăнкăртам Шăмăршă	„Марс" колхоз, Шăнкăртам районĕ	Майăн 30-мĕш
Вăрмар Тăвай	Муççырма колхозĕ, Вăрмар районĕ	Майăн 28-мĕш
Трак Çĕрпӳ Елĕк	„Ĕмĕт" колхоз, Çĕрпӳ районĕ	Майăн 29-мĕш
Шупашкар Ишлей	Ишек колхозĕ, Ишлей районĕ	Майăн 29-мĕш
Йетĕрне Тутаркас	Мăн Чураш колхозĕ, Йетĕрне районĕ	Майăн 30-мĕш
Сĕмĕрле Хĕрлĕ Чутай	Сурăм колхозĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕ	Майăн 30-мĕш

*) „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн 117-мĕш №-не пăх.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ С. КОРОТКОВ.

Çулталăкри ĕççене пăхса тухрĕç

Шăхасан районĕнчи пур шкулсем те çуркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевĕнче пулакан классенче вĕренекенсем çулталăк хушшинче мĕнле вĕреннине пăхса тухрĕç. Районри чылай шкулсем IV-мĕш чĕрĕкре лайăх результатсем кăтартрĕç. Авăспӳрт Кипечри вăтам шкулта вĕренӳре ĕлкĕрсе пыракансен шучĕ 97 8 процент, шкула çӳресси 97,5 процента çитнĕ. Вĕренекенсене пурне те пĕлӳ тĕрĕслевне тăратмала тунă.

Кĕçĕнрех классенче ĕç урăхларах тăрать. IV-мĕш класра 5 ачан, V-мĕш класра 4 ачан çитес вĕренӳ çулĕнче те çав классенчех вĕренмеле. Пĕтĕмпе 16 ачана пĕлӳ тĕрĕслевне тăратмасăр хăварнă. Вĕсенчен 3 ачана кĕркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевне тăратма палăртнă.

IV-мĕш чĕрĕкри ĕççене хакласинче йанăш тунисем те пулнă. VI „А" класра вĕренекен А. Васильĕвă чирленипе шкула çӳреймен. Çулталăкра мĕнле вĕренсе пынине хакланă чухне, учителсем ăна отметкăсем лартса паман.

К. Лазарĕв.

Джамбул вечĕрĕ

Майăн 23 мĕшĕнче социалисăмла çĕршыври мухтавлă йурăçăн, орденоносĕц Джамбулăн творчествăлă ĕçĕ 75 çул тултарнă йатпа Чăваш совет писателĕсен Сойузĕ Шупашкарти пединститутра вечĕр туса иртерчĕ.

Вечĕрта Казахстан халăх йурăçин пурнăçĕпе кунçулĕ çинчен Ведерникăв йулташ доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн чăваш поечĕсемпе писателĕсем И. Тукташ, Уйап Мишши, Усли Васлейĕ, Митта Петĕрĕ, А. Алка, И. Малгай тата т. ыт.) Джамбула халаласа çырнă тата унăн чăвашла куçарнă сăввисене вуларĕç.

Çавăн пекех пединститутра вĕренекен студентсем те Джамбул сăввисене пысăк çĕкленӳпе тухса вуласа пачĕç!

Ваç. Алтай.

Çуллахи каникул

ЕЛĔК. Çуллахи каникул çывхарса çитет. Ачасем тăхăр уйăх вĕреннĕ хыççăн, виçĕ уйăха йахăн шкулсенчен уйăрăлаççĕ. Çак каникул вăхăтне ачасемшĕн усăлă, вĕсен кануне культурлă та савăнăçлă ирттерме тăрăшмала.

Çакна шута илсе комсомол райкомĕпе сутĕç пайĕ пионерсем валли районра пионер лагерĕ уçаççĕ. Унта пĕтĕмпе 100 ача пулмала. Лагĕр валли догăвăрсем тăрăх районри организацисенчен укçатенкĕ, колхозсенчен кирлĕ продуктăсем пухса çитерне те ĕнтĕ.

И. Нарышкин.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

Квалификацилĕ официантсем

кирлĕ

Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Кадыков урамĕ, 5. Пĕрлешулĕ апатланас тĕлĕшпе ĕçлекен уйрăм.
2—1

Чăвашполиграфтрестăн

1-мĕш № Типографине

УЧОТЧИКСЕМ КИРЛĔ

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕн

111- № приказĕ

1938 ç. майăн 17-мĕшĕ

Чăваш республикĕнчи ертелсене пĕрлешмен кустарсемпе ремесленниксен тупăшĕсене шута илсе вĕсем çине 1938 çулшăн тупăшран илекен налог хурасси çинчен 1937 çулхи декабĕрĕн 31-мĕшĕнче йышăннă постановленийе улăштарасси çинчен.

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕ 1937 çулхи декабĕрĕн 31-мĕшĕнче 249-мĕш № приказ тăрăх—ертелсене пĕрлешмен кустарсемпе ремесленниксем пуçа тăхăнмалисем çĕлекенсем, сăн ӳкерекенсем, парикмахерсем, сехет йусакансем çине тупăшран илекен налог хурассине („Чăваш Коммунĕ" хаçатри 1938 çулхи йанварĕн 12-мĕшĕнче пичетленсе тухнă) улăштарса, 1938 çулшăн тупăшран илекен налог нормине Чăваш АСС Республикĕ тăрăх çапла çирĕплетес;

№№	ПРОМЫСЛА ЙАЧĔСЕМ	Тупăш нормисем: Улатăр, Канаш, Шупашкар хулисенче	Тупăш нормисем: Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Йетĕрне, Сĕмĕрле хулисенче	Тупăш нормисем: Ытти вырăнсенче
8	Заказчиксен материалĕнчен пуçа тăхăвмалисем çĕлени	6000	5000	4000
13	Çуртра вырнаçнă фотографи . . .	8000	7000	6000
14	Çавăн пекех урамри фотографи . .	6000	6000	5000
15	Парикмахĕрски	6000	6000	5000
17	Заказчиксем валли сехетсем йусани	8000	7000	6000

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ ЗАХАРĂВ

Чăваш АССР

Çутĕç Халăх Комиссариачĕ

Улатăрти, Патăрйелĕнчи, Канашри, Нурăсри, Пăрачкаври, Çĕрпӳри, Шупашкарти тата Йетĕрнери педагогикă училищисен 1-мĕш класĕсене 1938—39 вĕренӳ çулĕнче вĕренекенсене илесси çинчен пĕлтерет.

Педагогикă училищисен 1-мĕш класне туллимар вăтам шкул пĕтернисене тата вăтам шкулта 7 çул вĕреннисене 15 çулхисенчен 35 çулхисем таран илеççĕ.

Зайавленисене училищăсен директăрĕсен йачĕпе йамала, пĕрле çак документсем кирлĕ:

а) Хăш çулта çурални çинчен свидетельствă;

б) Вĕренни çинчен свидетельствă;

в) Икĕ фотокартăчкă (кашнин çине алпусса çирĕплеттермеле).

г) Сывлăх пирки тухтăртан илнĕ справкă.

Документсене подлинниксене çеç памала. Зайавленисене июнĕн 10-мĕшĕччен пуçласа августăн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

1-мĕш класа вĕренме кĕрекенсем пурте, отличниксемсĕр пуçне, августăн 16-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕччен испытани тытаççĕ—туллимар вăтам шкул программи тăрăх вырăс чĕлхипе, чăваш чĕлхипе арифметикăпа (çыртарса тата сăмахпа) алгебрăпа (çыртарса), географипе, геометрипе тата ССР Сойузĕн Конституцийĕпе (сăмахпа).

Шкул уйрăмĕсемсĕр пуçне педучилищăсенче тата çакнăшкал уйрăмсем пур: Улатăрта—библиотекă уйрăмĕ, Канашра—шкул çулне çитменнисен уйрăмĕ, Йетĕрнере—физкультурă, Патăрйелĕнче—тутарсен (шкул) уйрăмĕ.

2—1

Уполномоченный Чувашглавлита № 262

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтрест. Заказ № 408.